27-мӗш çул тухать. Хакӗ 20 пус.

1945 МАРТ 3 ШАМАТКУН 41(6792) №

Чăваш Коммуни

Пӗтӗм тӗнчери пролетарисем, пӗрлешӗр!

ВКП(б) ОБКОМӖПЕ ШУПАШКАР ХУЛА КОМИТЕЧӖН, ЧАССР ВЕРХОВНЫЙ СОВЕЧӖН ТАТАШУПАШКАР ХУЛАСОВЕЧӖН ХАÇАЧӖ

Вырăнти тата коопераци промышленноçӗсен ӗçне тӗпренех лайăхлатмалла

Ӗçсыннисен куллен хи ыйтăвӗсене тивӗçтерсе пырасси халӗ пӗтӗмӗшпех вырăнти промышленность ӗçӗнчен, коопераци промышленноçӗпе апат-çимӗç промышленноçӗн ӗçӗнчен килет. Шупашкарти е районсенчи магазинсенче сӗтел-пукансем, савăт-сапасем, ӗçсыннисене кирлӗ пулакан япаласем е тата куллен кирлӗ ытти таварсем тупса илме час-часах йывăр пулсан, çакă вара пирӗн вырăнти промышленность, коопераци промышленноçӗпе апат-çимӗç промышленноçӗ çителӗксӗр ӗçленине пӗлтерет. Çак промышленноçсем начар е лайăх ӗçлесси вара вырăнти советсен пуçарулăхӗнчен, партипе совет организацисем вӗсен предприятийӗсене ертсе пыма пӗлнинчен, вӗсен ӗçӗпе куллен интересленсе, кирлӗ вăхăтра пулăшу пама пӗлнинчен килет.

Иртнӗ çулта пирӗн республикăри вырăнти промышленность предприятийӗсемпе артельсем хушшинче лайăх ӗçлекенсем те, начар ӗçлекенсем те пулчӗç, анчах нумайӗшӗ вӗсем çителӗксӗр ӗçлерӗç. Апат-çимӗç Халăх Комиссариачӗн промышленноçӗ плана ирттерсе тултарчӗ пулин те тата Вырăнти Промышленность Халăх Комиссариачӗн предприятийӗсем 1943 çулхинчен ытларах продукци туса кăларчӗç пулин те, республикăри вырăнти промышленноçпа коопераци промышленноçӗ, пӗтӗмӗшпе илсен, 1944 çулта начах та çителӗксӗр ӗçлерӗç. Пӗтӗм продукци кăлармалли плана Наркомместпром 96 процент, промысла кооперацийӗ—81,3 процент, инвалидсен кооперацийӗ 83 процент кăна тултарчӗç. Плана ассортиментсем тăрăх тултарасси уйрăмăнах çителӗксӗр пулса пычӗ. Промысла коопераци Управленийӗ тăрăх 42 тӗслӗ япаларан 7 тӗслӗ япала енӗпе кăна плана тултарнă, вырăнти промышленность предприятийӗсем 36 тӗслӗ япаларан 6 япала енӗпе кăна плана пурнăçа кӗртнӗ. Хуласемпе районсенчи 16 промкомбинат, 10 апат-çимӗç комбиначӗ, промысла кооперацийӗн 117 артелӗ, инвалидсен кооперацин 18 артелӗ иртнӗ çулта плана тултараймарӗç.

Вырăнти промышленность предприятийӗсемпе артельсем уйрăмах Первомайски, Шăмăршă, Красноармейски, Хӗрлӗ Чутай, Элӗк, Йӗпреç, Елчӗк районӗсенче чăтма çук япăх ӗçлерӗç.

Мӗнпе ăнлантарса памалла-ха вырăнти промышленность предприятийӗсемпе артельсем иртнӗ çулта çавăн пек начах та çителӗксӗр ӗçленине?

Вырăнти промышленность предприятийӗсемпе артельсен ӗçӗнче тӗрлӗ çитменлӗхсем нумай. Промкомбинатсемпе артельсен руководителӗсем час-часах улшăнса тăраççӗ. Производствăра ӗçе организацилеме пӗлменнине тата çавна пула ӗç тухăçлăхӗ çителӗксӗр пулнине кăтартакан тӗслӗхсем сахал мар. Оборудованипе туллин усă курмаççӗ, вӗсем нумай вăхăт ӗçсӗр тăраççӗ. Чӗртаварпа материалсене кирлӗ чухлех хатӗрлессишӗн тата вӗсене перекетлӗн расходлассишӗн тивӗçлипе кӗрешни çук. Продукци пахалăхне лайăхлатас тата унăн хăйне ларакан хакне йӳнетес тӗлӗшпе, брак тăвассине чакарас тӗлӗшпе предприятисен руководителӗсем чăннăн хуçа пек тăрăшмаççӗ. Çакна пула вара чылай çӗрте финанс енӗпе пысăк йывăрлăхсем тухса тăраççӗ, рабочисемпе служащисене ӗç укçи вăхăтра параймаççӗ.

Хăшпӗр предприятисемпе артельсен руководителӗсем хăйсен начар ӗçне чылай чухне: материалсемпе чӗртавар турттарма транспорт çителӗксӗр тесе ăнлантарса пама пăхаççӗ, анчах çав вăхăтрах транспорт туянма е пур пек транспортпа тухăçлăн усă курма тăрăшмаççӗ. Шăмăршă районӗнчи промкомбинат управляющийӗ хăйӗн автомашинипе çăвӗпех пассажирсене Канаша турттарса усă курнă, унăн тракторӗ вара нумай вăхăт хушши ӗçсӗр тăнă.

Вырăнти промышленность предприятийӗсемпе артельсен ӗçӗнче чăрмав кӳрекен тепӗр пысăк çитменлӗх вăл—квалификациллӗ кадрсем çителӗксӗрри пулса тăрать. Анла пулин те, кадрсем хатӗрлес ӗçе кунта калама çук сӳрӗк туса пыраççӗ. Сăмахран, промкоопераци Управленийӗ кадрсем хатӗрлемелли плана 81 процент кăна пурнăçа кӗртнӗ, халиччен ӗçленӗ массăллă профессиллӗ кадрсен квалификацине ӳстерес тӗлӗшпе те сахал ӗç тунă.

Пуриншӗн те паллă, рабочисемпе служащисен социализмлă ăмăртăвӗ—предприятипе артелӗн производство планне ăнăçлăн тултарма, ӗç тухăçлăхне ӳстерме, продукци пахалăхне лайăхлатма, унăн хăйне ларакан хакне чакарма пулăшакан чи лайăх меслет пулса тăрать. Анчах республикăри вырăнти промышленность предприятисемпе артельсенче чылайӗшӗнче социализмлă ăмăртăва организацилесе ертсе пыма тăрăшмаççӗ: ăмăртакан рабочисен ӗçне уйрăмăн шута илсе пырассине йӗркелемен, профессисем тăрăх ăмăртса ӗçлессине организацилемен, вăхăтран вăхăта ăмăрту итогӗсене тăвас тата малта пыракансене хавхалантарас майсене пурнăçа кӗртсе пымаççӗ.

ВКП(б) хула комитечӗсемпе райкомӗсем тата райисполкомсем чылайӗшӗ вырăнти промышленноçпа коопераци промышленноçӗн ӗçне лайăхлатасси çинчен ВКП(б) Обкомӗн XIX-мӗш пленумӗ йышăннă решение пурнăçа кӗртес енӗпе тивӗçлӗ мерăсем йышăнман. Вӗсем предприятисемпе артельсен ӗçӗпе тӗплӗн интересленмеççӗ, вӗсене чӗртаварпа материалсем тата ӗç вăйӗпе транспорт тупма пулăшмаççӗ. Предприятисемпе артельсенчи рабочисем тата служащисем хушшинче политикăллă-массăллă ӗçе сӳрӗклетнӗ. Нумай предприятисемпе артельсен хӗрлӗ кӗтесӗсем ӗçлемеççӗ, культработниксем çук пирки культура сооружӗсен ӗçӗ чарăнса ларнă.

1945 çулта вырăнти промышленноçпа коопераци промышленноçӗ хăйсен ӗçне тӗпренех лайăхлатма тивӗçлӗ. Çакă вара халлӗхе курăнсах каймасть-ха. Пӗлтӗрхи çитменлӗхсем кăçал та çаплах пулса пыраççӗ, вӗсене пӗтерес тӗлӗшпе Вырăнти промышленность Халăх Комиссариачӗпе Промкоопераци Управленийӗ ку тарана çитсе те татăклă мерăсем йышăнман.

Çак кунсенче ВКП(б) Обкомӗн бюровӗ вырăнти тата коопераци промышленноçӗсен ӗçӗн 1944 çулхи итогӗсемпе 1945 çулхи задачисем çинчен сӳтсе-явнӗ. Парти Обкомӗн бюровӗ вырăнти тата коопераци промышленноçӗсен ӗçне лайăхлатмалли майсене кăтартса хăварчӗ.

1945 çулхи производство планне пур енӗпе те пӗтӗмӗшпех тултармалла тăвас тесен, вырăнти промышленность предприятийӗсемпе коопераци промышленность артелӗсен кăçалхи малтанхи уйăхсенчен пуçласах йӗркеллӗ тата тивӗçлӗ хăвăртлăхсемпе ӗçлесе пымалла, ӗç тухăçлăхне тăтăшах ӳстерсе пымалла. Предприятисемпе артельсен руководителӗсен, ӗç начар пынине тӗрлӗ сăлтавсемпе ăнлантарса пама хăтланас йăлана пӗтерсе, ӗçри йывăрлăхсене пур майсемпе те çӗнтерсе пыма тăрăшас пулать. Производствăри ӗçе пӗлсе организацилени, кашни сменăна уйрăм задани парассине йӗркелесе яни, плансемпе ӗç нормисене мӗнле тултарса пынине куллен тӗрӗслесе тăни,—çаксем ӗнтӗ предприятисемпе артельсен ӗçне лайăхлатма кирлӗ условисем пулса тăраççӗ. Çакăнпа пӗрлех технорукесен, производство заведующийӗсен, инструкторсемпе бригадирсен тата мастерсен ответлăхӗпе авторитетне çӗклемелле, дисциплинине çирӗплетсе пымалла.

Ӗçӗн ăнăçлăхне пур чухне те кадрсем татса параççӗ. Çакна шута илсе, Наркомместпромпа Промкоопераци Управленийӗн çӗнӗ кадрсем хатӗрлес тата массăллă профессиллӗ рабочисен квалификацине ӳстерес ӗçе уйрăмах çине тăрса туса пымалла. Ку енӗпе вара предприятисемпе артельсенче стахановла шкулсем, техника кружокӗсем организацилени, тӗрлӗ курсем ирттерни питех те усăллă пулмалла.

Вырăнти промышленность предприятийӗсемпе промкоопераци артелӗсенче чӗртаварпа материалсене перекетлессишӗн, вӗсене нормăпа кăтартнă тăрăх расходлассишӗн кӗрешӳ пуçарса ямалла. Кунпа пӗрлех продукцие производство техникине пăхăнса, пысăк пахалăхпа туса кăларассишӗн кӗрешмелле. Кăларнă продукци çине предприятин е артелӗн маркине лартассине йӗркелесе ямалла, çапла вара рабочисемпе служащисене предприятипе артелӗн чысне ӳлте тытассишӗн кӗрешме мобилизацилемелле.

Суту-илӳ организацийӗсем вырăнти промышленноçпа коопераци промышленноçне пысăк пулăшу пама тивӗçлӗ. Вӗсен хатӗр продукцие çийӗнчех ӗçсыннисем патне çитерме тăрăшмалла, ӗçсыннисем мӗнле тавар ыйтни çинчен предприятисене тата артельсене пӗлтерсе тăмалла. Анчах суту-илӳ организацисем çакна тивӗçлипе пурнăçа кӗртсе пымаççӗ-ха, туса кăларнă продукцие вӗсем час-часах нумай вăхăт хушши илмесӗр тăраççӗ. Çак çитменлӗхе суту-илӳ организацисен халех пӗтерес пулать.

Райсовет исполкомӗсемпе ВКП(б) райкомӗсен вырăнти промышленноçпа коопераци промышленноçне пур майсемпе те пулăшса пымалла. Предприятисемпе артельсем хушшинче, уйрăм рабочисем хушшинче социализмлă ăмăртăва вăйлатса пымалла. Вырăнти тата коопераци промышленноçӗн работникӗсене 1945 çулхи малтанхи çурçул планне срокчен—Чăваш республики 25 çул тултарнă тӗле—пурнăçа кӗртме мобилизацилемелле.

Совет Информаци Бюровӗнчен

МАРТĂН 1-МӖШӖНЧИ ОПЕРАТИВНĂЙ СВОДКА

Мартăн 1-мӗшӗнче Померанире, НОЙ ШТЕТТИН хулинчен çурçӗр-хӗвелтухăçнерехре тата çурçӗртерехре, пирӗн çарсем малалла тапăнса пынă, ФЛЕММИНГСОРТ, ФЛЕТЕНШТАЙН, ФАЛЬКЕНХАГЕН, ХЕЛЬКЕВИЗЕ, НОЙДОРФ, ЦЕХЕНДОРФ, БУХВАЛЬД, ЭШЕНРИГЕ ялӗсене туртса илнӗ.

БРЕСЛАУ районӗнче пирӗн çарсем хулара хупăрласа илнӗ тăшман группировкине пӗтерсе тăкасшăн çапăçнă, БРЕСЛАУ хулипе пӗрлешсе ларнă АЛЬТХОФНАСС, ГРОССЕ-ЧАНШ ялӗсене туртса илнӗ тата 10 квартал йышăннă.

Чехословакире, ЛУЧЕНЕЦ хулинчен хӗвеланăçнерехре, пирӗн çарсем, сăртлă-вăрманлă вырăнти йывăр условисенче кӗрешсе, ЗАЕЖОВА, НЕРЕСНИЦА, ЗАБАВА, БЗОВИК, СТАРА ГОРА, КЛАСТАВА, БАДАН ялӗсене туртса илнӗ.

Фронтăн ытти участокӗсенче тӗллӗн-тӗллӗн çапăçнă тата разведчиксем шыраса çӳренӗ.

Февралӗн 28-мӗшӗнче мӗнпур фронтсенче нимӗçсен 48 танкне çӗмӗрсе тăкнă. Сывлăшри çапăçусенче тата зенитнăй артиллери тăшманăн 28 самолетне персе ӳкернӗ.

☆ ☆ ☆

Померанире, Нойштеттин хулинчен çурçӗр-хӗвелтухăçнерехре, пӗр соединени чăçӗсем тăшман хирӗç тăнине çӗнтере-çӗнтере, малалла куçса пынă. Флетенштайн ятлă пысăк чугун çул станцине нимӗçсенчен тасатнă. Çавăн пекех тата Руммельсбург хулинчен 5 километр кăнтăртарахра ларакан Фалькенхаген ялне туртса илнӗ. Ку ял шоссе çулӗсен узелӗ пулса тăрать. Нимӗçсем хăйсен резервӗсене илсе пыраççӗ те çул çинчен тӳрех çапăçăва кӗртсе яраççӗ. Совет чăçӗсем тăшман контратакисене пурне те сирсе янă. Нимӗçсене пысăк çухатусем кӳнӗ. Нойштеттин хулинчен çурçӗртерехре пирӗн çарсем, йышлă кӳлӗллӗ район урлă каçса, темиçе ял туртса илнӗ. Ку ялсене нимӗçсем малтанах пур енчен те хӳтӗлеме хатӗрлесе хунă пулнă. Кун каçиччен совет чăçӗсем тăшманăн 2.000 салтакӗпе офицерне ытла пӗтерсе тăкнă. 400 нимӗçе тыткăна илнӗ, 9 танкпа хăй тӗллӗн çӳрекен туппа çунтарса янă е персе çӗмӗрнӗ. Нимӗçсенчен пӗтӗмӗшпех юсавлă 16 самолет, 18 тупă, 6 склад тата ытти трофейсем те тытса илнӗ.

* * *

Бреслау хулинче пирӗн çарсем тăшман группировкине хупăрласа илнӗ унка малалла хӗссе пынă. Кашни урамшăн, кашни çуртшăн хаяр тытăçусем пула-пула иртеççӗ. Пӗр часть боецӗсем, Бреслау хулипе пӗрлешсе ларнă Гроссе-Чанш ялне нимӗçсенчен тасатнă. Пирӗн ытти чаçсем çӳллӗ вырăнсенче çирӗпленсе ларнă тăшман хирӗç тăнине çӗмӗрсе тăкнă та хулапа пӗрлешсе ларнă Альтхофнасс ялне туртса илнӗ. Çав ялсен урамӗсенче нимӗç салтакӗсемпе офицерӗсен темиçе çӗр вилли выртса юлнă. Штурмлакан ушкăнсемпе пӗрле пырса, совет артиллерисчӗсем нимӗçсен персе тăракан 90 вырăнне ытла пусарса лартнă. Пирӗн подразделенисем тăшманпа Вольф фирмин пысăк металлурги завочӗн территорийӗнче çапăçнă. Завод цехӗсен стенисем хыçӗнче тăрса, гитлеровецсем хаяррăн хирӗç тăраççӗ. Кунти çапăçусенче час-часах алă вӗççӗн тытăça-тытăça илме лекет. Çав тери хăвăрт атакăласа, совет боецӗсем завод территорийӗн çуррине тăшмантан тасатнă. 10 тупă, 32 пулемет тата ытти трофейсем те тытса илнӗ. 200 гитлеровеца ытла тыткăна илнӗ.

* * *

Украинăри 4-мӗш фронтри пӗр участокра тăшман, хăйӗн позицийӗсене лайăхлатма хăтланса, атака пуçласа янă. Нимӗçсем çав çапăçăва хăйсен пехотине пӗр полка çити кӗртсе янă. Пӗр чаçри гвардеецсем гитлеровецсене флангран пырса çапнă та каялла хăваласа янă. 200 нимӗçе çити пӗтерсе тăкнă.

* * *

Белоруссири 2-мӗш фронт çарӗсем нимӗçсен 2-мӗш армин командующийӗн Вейс генерал-полковникăн 1945 çулхи февралӗн 3-мӗшӗнче кăларнă приказне тытса илнӗ. Приказра çапла каланă: «Армин тылӗнчи районра хăравçăсемпе таркăнсем ушкăнӗ-ушкăнӗпе сулланса çӳреççӗ. Вӗсем пысăк йывăрлăха кӗрсе ӳкнӗ империшӗн пыракан кӗрешӳрен пăрăнса юлма тăрăшаççӗ. Таркăнсем хамăр çӗршыва шалалла куçакан граждăнла халăх колонисем çумне хутшăнаççӗ. Кашни салтака е офицера, хăй пӗлекен таркăн çинчен пӗлтермесен е ăна тытса чармасан ответ тытараççӗ, вара ăна тăшмана сутăнни çынна айăпланă пекех айăплаççӗ. Çав сулланса çӳрекен хăравçăсемпе саботаж тăвакансене тытса чарнă чухне ирӗксӗрлемелли пур хатӗрсемпе те усă курма юрать, вӗсене кирек мӗнле майпа та арестлеме юрать. Кам паян «малалла кӗрешни шанчăксăр» е тата «акă хапхана часах хупса лартаççӗ те эпир «хуранта» тăрса юлатпăр», тесе калать, çав «таркăнсем» саботаж тăвакансем шутне кӗреççӗ». Малалла Вейс генерал-полковник «кашни корпусра халех хăвăрт куçса çӳрекен хирти суд» организацилеме хушать.

Нимӗçсен 2-мӗш арми командующийӗн приказӗ вăл интереслă. Нимӗçсен Вейс генералӗ çакна ирӗксӗрех йышăнать: Нимӗç салтакӗсем пӗчченшерӗн кăна мар, ушкăнӗ-ушкăнӗпе çапăçу хирӗнчен тарса, тылра сулланса çӳреççӗ. Çӗнӗ условисене кура, нимӗç салтакӗсем граждăнла халăх тумтирӗсене тăхăнаççӗ те фронт патӗнчи вырăнсенчен таракан граждăнла халăх колонисемпе пӗрле тыла куçаççӗ. Вейс генерал çавăн пекех тата «нимӗçсен кӗрешӗвӗ шанчăксăра тухрӗ» текен салтаксене те вăйлăн çӗмӗрет. Вейс армийӗнче çавăн пек салтаксем чылай пулмалла.

Гитлеровецсем, çакăн пек хаяррăн айăпласа, нимӗç салтакӗсене Германи аяла пулнă çак вăрçа малалла тăстарма хăтланаççӗ. Анчах та вӗсене хирти ахаль судсем пулăшмарӗç, çавăн пекех хăвăрт куçса çӳрекен судсем те пулăшас çук. Фашистла Германие пуçӗпех аркатса тăкас кунсем çывхарса çитеççӗ».

Кенигсбергран кăнтăр-хӗвеланăçнерехре

Кенигсбергран кăнтăр-хӗвеланăçнерехре хаяр çапăçусем пыраççӗ. Пирӗн çарсем тăшманăн Хӗвелтухăç Пруссире хупăрласа илнӗ группировкине хӗссех пыраççӗ. Енер пирӗн чăçсем Грюнлинде, Ворвеген, Лемкюнен, Оттен, Готтесгнаде, Фридрихсхорф ятлă ялсене тытса илнӗ.

Çав çапăçусенче совет воинӗсем çав тери пысăк паттăрлăх, çирӗплӗх, хăюлăх кăтартаççӗ. Османов офицер, ертсе пыракан батарейăна нимӗçсем темиçе хут та атакăланă, анчах вӗсене сире-сире пăрахнă. Акă, тинӗсрен вӗрекен çил тӗтре вӗçтерсе килнӗ. Таврара курăнми пулса тăнă. Вуннăмӗш хут контратакăна куçнă гитлеровецсем батарея патне 60—70 метра çити çывхарнă. Елисеевăн, Ширинăн тата Кукаренкăн тупă расчечӗсем çав контратакăна сирсе янă. Вӗсен позицийӗ умӗнче гитлеровецсен 52 вилли выртса юлнă.

Горопашныйпа Сокольниковăн тупă расчечӗсем тăшман артиллерийӗ пилӗк хутчен вăйлă пере-пере илнине чăтса ирттернӗ. Тăшман пехоти контратака пуçласа ярсан, ăна вăйлă персе кӗтсе илнӗ. Çапăçу хирӗнче тăшман салтакӗсемпе офицерӗсен виллисем нумай выртса юлнă.

Дьяченко капитанăн танкисчӗсем курăнмалла мар туса лартнă дота ăçăрханă. Тăшман унтан пирӗн пехота çинелле персе тăнă. Тӳрӗ пырса вăл дота тытса илме май килмен. Вăл пур çӗре те персе тăнă. Подачин лейтенантăн танкӗ дот патне хыçран пырса тухнă та, 200 метртан тупăпа икӗ хут персе, дот алăкне пӗтӗмпех çӗмӗрсе тăкнă. Нимӗçсен 2 офицерӗпе 20 салтакне вӗлернӗ, чӗрӗ юлнă ытти 8 гитлеровец вара тыткăна парăннă. Орлов танкист 2 нимӗç танкне çунтарса янă, танксене хирӗç перекен 2 туппа персе çӗмӗрнӗ, 3 пулемет çӗмӗрнӗ тата 26 гитлеровеца ытла вӗлерсе пӗтернӗ.

Калиновский офицерӗн хăй тӗллӗн çӳрекен туппи наступление куçнă пехотăна пулăшса пынă. Мюклюк наводчик тӗмесем хушшинче пытаннă туппа курнă. Пӗрре пенипех тăшман туппине юрăхсăра кăларнă.

Ял хӗррине хăй тӗллӗн çӳрекен тупăпа персе пирӗннисем миномет батарейине пусарса лартнă, анчах нимӗçсем çурт подвалӗнчен автоматсемпе тата винтовкăсемпе урам тăрăх персе тăнă. Пирӗн хăй тӗллӗн çӳрекен тупă дот патнех пырса тăнă та персе тăракан амбразурăна хупласа лартнă. Часах подвалтан 8 гитлеровец тухнă вӗсем тыткăна парăннă.

Çынсемпе техника тӗлӗшӗнчен пит пысăк çухатусем тӳсеççӗ пулин те, гитлеровецсем çӗнӗрен çӗнӗ резервсемпе усă кураççӗ, хаяр контратакăсем тăваççӗ. Анчах та пирӗн çарсем тăшмана хӗстерсе, хупăрласа илнӗ унка пӗрмаях хӗссе пыраççӗ.

К. ПУХОВ.

ÇАПАÇУРИ ÇАР, мартăн 1-мӗшӗ.
(ТАСС спецкорӗ).

ВЫИГРЫШСЕН ВЫЛЯВĔ

Февралӗн 28-мӗшӗнче Мускавра Союзсен Çурчӗн Октябрьски залӗнче Виççӗмӗш Пятилетка Заемӗн (4-мӗш çулхи кăларăмӗн) 13-мӗш вылявӗ пулса иртнӗ. Вылявра 102 миллион та 522 пин тенкӗлӗх 644 пин выигрыш пулнă. Вӗсен шутӗнче 3.000-шер тенкӗлӗх выигрышсем 70 тата 1.000-шер тенкӗлӗх выигрышсем 330 пулнă. (ТАСС).

Совет Союзӗн Геройӗ Николай Шашкин

Вăрçăччен вăл Çӗмӗрлере катка-пичке туса пурăннă. 1942 çулхи мартра вăл вара—фронтра. Икӗ çул ытларах вăхăт хушшинче вăл совет воинӗн йывăр та паттăр çулне утса тухнă.

Пирӗн çарсем хăвалăн тапăнса пынипе каялла чакакан тăшман 1943 çулхи октябрьте Мелитополь хули таврашӗнче вăхăтлăха çирӗпленсе ларнă. Тăшман унта хирӗç тăмалли хăватлă сооруженисем тунă та—Хӗрлӗ Çар кăнтăрпа хӗвеланăçнелле текех куçма пултараймасть ӗнтӗ, тесе шутланă. Нимӗçсен фашистла çарӗсем кунта мӗнпур вăйпа Хӗрлӗ Çара хирӗç тăнă. Чаçăн командованийӗ пӗр подразделение нимӗçсен вăйлă çирӗплетнӗ позицине штурмлама приказ панă. Боевой приказ илнӗ подразделенире щăпах та пирӗн земляк старшина Николай Тимофеевич Шашкин пулнă. Шашкин юлташ хăйӗн 14 боецӗпе пӗрле тăшман траншейисене атакăланă та вӗсене йышăннă. Анчах та нимӗçсем пирӗн боецсем çине çав тери вăйлăн персе тăнă. Хăйӗн подразделенийӗнчен маларах кайнă Шашкинпа унăн ушкăнӗн çӗр çине выртма тивнӗ.

Совет боецӗсен пысăк мар ушкăнне нимӗçсен роти атакăланă. Шашкинăн 11 юлташӗ паттăрсен вилӗмӗпе вилнӗ. Шашкин икӗ боецпа çеç тăрса юлнă, вӗсем те йывăр аманнă. Фрицсем хӗстересех пынă. Николай Шашкин хăйӗн патне пулеметпа винтовкăна шутарса илнӗ. Хăйӗн умне пулемет лартнă, сылтăм енне—автомат, сулахай енне винтовка хунă.

...Шашкин юлташ тăшман пехотин икӗ атакине сирсе янă. Çав çапăçусенче 30 нимӗçе вӗлернӗ. Анчах та малта нимӗçсен икӗ танкӗ курăнса кайнă. Вӗсем шиксӗр воин патнелле çывхарса пынă. Танксем уммах çывхарса çитсен, Шашкин вӗсенчен пӗрне гранатăпа персе çӗмӗрнӗ, тепри вара каялла чакнă.

Çапла паттăррăн çапăçса, пирӗн земляк Николай Тимофеевич совет çӗрӗн пӗр лаптăкне хамăр чаçсем çитиччен тăшмантан сыхласа тăнă. Çамрăк боецăн паттăр ӗçӗсене Правительство тивӗçлипе хакланă: Николай Тимофеев Шашкин старшинана Совет Союзӗн Геройӗ ятне панă.

* * *

Хальхи вăхăтра Шашкин юлташ пехотнăй училищӗре вӗренет.

Республикăри учительсене СССР орденӗсемпе медалӗсене пани

1945 çулхи мартăн 1-мӗшӗнче Шупашкарта СССР Верховный Совет депутачӗ, Чăваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ **З. А. Андреева** юлташ Правительство наградăланă çынсен пысăк ушкăнне орденсемпе медальсем пачӗ.

Шкулсенче ачасене вӗрентсе ӳстерес тӗлӗшпе ăнăçлăн тата вăйя шеллемесӗр ӗçленӗшӗн республикăри çак учительсем наградăсем илчӗç:

Ленин орденне—Куславкка районӗнчи Пăрмасри пуçламӗш шкулăн заведующийӗ тата учителӗ **А. Т. Некрасов**, Тăвайри вăтам шкулăн кӗçӗн класӗсенче вӗрентекен учительница **А. М. Тимофеева** юлташсем илчӗç.

Ӗçлӗх Хӗрлӗ Ялав орденне—Шăхасан районӗнчи Вăрман Кипекри çичӗ çул вӗренмелли шкулăн директорӗ тата учителӗ **С. П. Вишняков**, Красноармейски районӗнчи Чадукассинчи пуçламӗш шкулăн заведующийӗ **Е. Т. Волкова**, Шупашкарти хӗрачасен 1-мӗш номерлӗ вăтам шкулӗн учительници **Л. Г. Денисова**, Чăваш АССР Çутӗç Халăх Комиссарӗ **М. П. Макаров**, Етӗрнери педагогика училищин преподавателӗ **И. Е. Ярадайкин**, Ишлей районӗнчи Мăналти 7 çул вӗренмелли шкулăн учительници **В. Т. Томасова** юлташсем тата ыттисем те, пурӗ 14 çын илчӗç.

«Хисеп палли» орденне—Шупашкар районӗнчи Коснарти пуçламӗш шкулăн заведующийӗ тата учителӗ **К. А. Афанасьев**, Шупашкарти 1-мӗш номерлӗ вăтам шкулăн кӗçӗн класӗсенче вӗрентекен учительница **Ф. К. Железкова**, Чăваш АССР Наркомпросӗн Учительсен пӗлӗвне ӳстермелли институчӗн методисчӗ **А. Т. Трофимов** т. ыт. те, пурӗ 12 çын илчӗç.

«Ӗçри хастарлăхшăн» медале—Шупашкарти 2-мӗш номерлӗ вăтам шкулăн директорӗ пулса ӗçленӗ, халь хулари çутӗç пайӗн заведующийӗ пулса ӗçлекен **Л. Н. Богатырева**, Çӗрпӳри вăтам шкулăн учительници **С. А. Лыстенина**, Чăваш АССР Наркомпросӗн учебниксем тата программăсем енӗпе ӗçлекен инспекторӗ **М. Н. Николаева** т. ыт. те, пурӗ 17 çын илчӗç.

«Ӗçре палăрнăшăн» медале—Вăрмар районӗнчи çутӗç пайӗн заведующийӗ **К. П. Павлов**, Куславкка районӗнчи Аслă Куснарти çичӗ çул вӗренмелли шкулăн учительници **М. Д. Трубина** т. ыт. те, пурӗ 16 çын илчӗç.

Награда илнисем хăйсен ӗçӗсене пысăка хурса хакланăшăн партипе Правительствăна тав турӗç, малашне тата лайăхрах ӗçлеме сăмах пачӗç.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. А. Андреева юлташ награда илнӗ учительсене саламласа, вӗсене ачасене вӗрентсе ӳстерес ӗçре тата тăрăшарах ӗçлеме сунчӗ.

Юлашкинчен зала çамрăк пионерсем маршпа утса кӗрсе, правительство наградисене илнӗ халăх учителӗсене хулари мӗнпур шкул ачисен ячӗпе саламларӗç.

Нумай ачаллă амăшӗсене орденсемпе медальсем пани

ВАРНАР. Нумаях пулмасть кунта Чăваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ **З. А. Андреева** юлташ СССР Верховный Совет Президиумӗ ячӗпе нумай ачаллă амăшӗсене орденсемпе медальсем пачӗ.

«Ача амăшӗн мухтавӗ» ятлă 1-мӗш степеньлӗ ордена А. И. Кудрявцевăна, **«Ача амăшӗн мухтавӗ»** ятлă 3-мӗш степеньлӗ ордена М. Н. Ивановăна, Е. Ф. Андреевăна, Е. Д. Быстрицкаяна, Е. М. Перцевăна тата М. А. Семеновăна панă.

«Ача амăшӗн медалӗ» ятлă медальсене пурӗ 20 çынна панă.

Чăваш АССР Верховный Совет Президиумӗн Председателӗ З. Андреева юлташ, çав ача амăшӗсене правительство наградисене илнӗ май, ырă сывлăх сунса саламларӗ.

Вăрман хатӗрлевӗнче тăрăшса ӗçлеççӗ

КАНАШ. «Хунав» колхоз вăрман хатӗрлемелли фронтовой уйăхлăхра тăрăшса ӗçлерӗ. Колхоз хăйӗн планне тултарнă. 200 кубометр вутă турттармалла пулнă пулсан, 240 кубометр турттарса кăларнă. Касас енӗпе те вăл плана тултарать.

Колхозник К. Степанов юлташ куллен 10 кубометр турттарса кăларать. Вăрманпромхоз ăна 8 метр пусма-тавар парса премиленӗ.

И. М.

Преми илнӗ артельте

ИШЛЕЙ. (Телефонпа). Тăрăнри промысла артелӗ çак çулта лайăх ӗçлет. Январь уйăхӗнчи плана вăл ытлашшипех тултарчӗ, планран ирттерсе сахал мар продукци туса кăларчӗ. Çавăнпа та артель Чăваш АССР Совнаркомӗн премине илме тивӗçлӗ пулчӗ.

Артельре 3 бригада. Вӗсенчен А. Павлова юлташăн бригади малта пырать. Бригада уйăхри задание 2—3 хут ирттерсе тултарать. Бригада членӗсем К. Кузнецова, Ю. Кузнецова, О. Зарубина, Х. Зарубина уйăхсерен 300—400-шар чăпта çапаççӗ.

Юлашки вăхăтра артель чăпта çапнисӗр пуçне урапа-çунасем юсама, çӗвӗ ӗçлеме тата тир тума тытăнчӗ.

Правлени председателӗ Николаев тата технорук Смелов юлташсем артель ӗçне лайăх йӗркелесе ертсе пыраççӗ.

В. ГУСЬКОВ.

Артельсен ӗçне вăйлатмалла

КӲКЕÇ. (Хамăр корр). Райпромкомбинатăн кăçал 1-мӗш кварталта ӗçсыннисем валли куллен кирлӗ таварсем 15 пин тенкӗлӗх туса кăлармалла. Райпромкомбинат ӗçсыннисем валли куллен кирлӗ таварсем туса кăларас енӗпе хăйӗн кварталти программине февралӗн 23-мӗшӗ тӗлне пӗтӗмпе те 34 процент çеç тултарнă.

Çавăн пекех апат-çимӗç комбиначӗ, инвалидсен Кӳкеçри артелӗ, Шăнкасри «Правда» артель тата ыттисем те хăйсен кварталти программисене икӗ уйăх хушшинче 25—30-шар процент çеç тултарнă.

Асăннă предприятисемпе артельсем ӗç тухăçлăхне ӳстерессишӗн тăрăшмаççӗ, учетпа отчет ӗçне те япăхтарса янă.

Инвалидсен артелӗн парикмахерскийӗнче кашни кун 15—20 çын таран пулать. Вӗсем мастерсене 100—200 тенкӗрен кая мар укçа тӳлесе хăвараççӗ. Анчах та артельте квитанци бланкӗсем çук пирки укçа илни çинчен ӗнентерекен хут памаççӗ. Çавна пула кунта ӗçлекен мастерсем илнӗ укçана хăйсен кăсйине чикеççӗ. Çапла вара артельте кам мӗн чухлӗ ӗçлени те курăнмасть.

Комбинатсемпе артельсен малашне учетпа отчет ӗçне йӗркелемелле, ӗç тухăçлăхне ӳстермелле.

Г. ПЕТРОВ.

Сталин юлташăн Хӗрлӗ Çар кунӗ ячӗпе панă приказне кӗнеке туса кăларнă

Политика литературин государство издательстви Верховный Главнокомандующин Совет Союз Маршалӗн И. Сталинăн 1945 çулхи февралӗн 23-мӗшӗнче панă приказне уйрăм кӗнеке туса кăларнă.

Кӗнеке тиражӗ — 5 миллион экземпляр.

(ТАСС).

Ишлей районĕнчи «Большевик» колхоз мăнтăр та вăйлă лашисемпе чапа тухнă. Çак колхозра лашасене ĕрчетмелли государство планне кашни çулах ирттерсе тултарассĕ. Кашни кĕсререн тиха илсе лайăх çитĕнтерессĕ.

Ӳкерчĕк çинче: «Большевик» колхозăн старши конюхĕ Н. Н. Пайманов юлташ хăй çитĕнтернĕ ăйăрпа (сулахайра) Пайманов юлташ старши конюх пулса 14-мĕш çул ĕçлет. Лайăх ĕçленĕшĕн ăна Чăваш АССР Верховнăй Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотине парса наградăланă.

Çуракине большевикла хатĕрленер!

Сортсăр вăрлăхсене сортлисемпе улăштарас ĕçе халех вĕçлемелле

Çуркуннне сывăхарса килет. Часах çулйĕрсем пăсăлĕç. Анчах та чылай районсем халь, çулйĕр лайăх вăхăтра, Госсортфонд склачĕсенчи сортлă тырăсене турттарма васкамаççĕ. Сортсăр тырăсене сортлисемпе улăштармалли плана Ишлей, Первомайски тата Октябрьски районсем кăна тултарнă. Канаш, Сĕнтĕрвăрри Çĕрпӳ тата Елчĕк районĕсем тырă улăштармалли плана 80—90 процента çити тултарнă.

Анчах та Сĕнтĕр, Шăмăршă, Чкаловски, Хĕрлĕ Чутай, Тăвай районĕсенчи çĕрĕç органĕсем сортсăр тырăпа сортлă вăрлăхсем улăштарса илес ĕç çине ытла та ответсăр пăхаççĕ. Февралĕн 28-мĕшĕ тĕлне çак районсем тырă улăштармалли плана пурĕ те 10—15 процент таран кăна пурнăçланă.

Республикĕри пур колхозсем те çак ĕçе пикенерех тытăнмалла. Госсортфонд склачĕсенчен илмелли вăрлăхлăх тырра сывăх кунсенчех турттарса пĕтермелле.

Çуракине мĕнле хатĕрленнине тĕрĕслессĕ

КРАСНОАРМЕЙСКОЕ. Тинçырма ялсоветĕнчи колхозсем çуракине мĕнле хатĕрленнине ятарласа тунă комиссисем тĕрĕслессĕ.

Тĕрĕсленĕ тăрăх «Чамыш», «Буксир», «Пахарь» колхозсем çуракине аван хатĕрленни палăрчĕ. Çав колхозсем пур тĕрлĕ вăрлăхсене те сортласа хунă, ут тавраşĕсемпе транспорт инвентарĕсем çителĕклĕ те юсавлă. Ку колхозсенче лашасене аван пăхаççĕ. Вăйсăр лашасене лайăх апат çине тăратнă.

Ял Советĕнчи «Дружба» тата Димитров ячĕпе тăракан колхозсем вара çуракине çителĕксĕр хатĕрленеççĕ. Ку колхозсенче транспорт инвентарĕсем юсавлă мар, ут тавраşĕсем çителĕксĕр тата вĕсенчен нумайĕшĕсем колхозниксен килĕсенче сапаланса выртаççĕ. Димитров ячĕпе тăракан колхоз вăрлăхсене сортласа пĕтермен.

Комисси «Трудовик» колхоз çуракине уйрăмах япăх хатĕрленнине палăртрĕ. Ку колхоз клевер вăрлăхне шĕкĕлчесе тасатса хуман, ялхуçалăх машинисене юсама пуçăнман, вĕсем тĕрлĕ вырăнта юр айĕнче сапаланса выртаççĕ. Лашасене пăхас ĕçре те йĕркелĕх çук. Вĕсене хуçасăррăн тыткаланине пула, 7 лашана хăмăт е ĕнерчĕк тивертсе суранласа пĕтернĕ. Ут таврашĕсем çителĕксĕр, вĕсем те колхозниксен килĕсенче, кам патĕнчине бригадирсем те пĕлмеççĕ. Çавăн пекех колхоз вырăнти удобренисем те хатĕрлемен. Çуракине хатĕрленес ĕçри çак çитменлĕхсем колхоз председателĕ Р. Тихонов васкаманнинчен, вăл «çуракиччен темĕн те тăвăпăр-ха», тесе лăпланса ларнинчен килеççĕ.

Комисси кая юлса пыракан колхозсене çак сывăх кунсенчех çуракине пур енĕпе те хатĕрлесе çитме хушса хăварчĕ.

А. ВАСИЛЬЕВА.

Пур ĕçе те вăхăтра тăваççĕ

КАНАШ. Буденный ячĕпе тăракан колхоз (председателĕ Е. Анисимова юлташ) çуракине тимлĕн хатĕрленет. Акмалли 69 центнер вăрлăха сортласа хунă. Тырăсене сортланă çĕрте О. Максимова, Е. Петрова, Т. Романова колхозницăсем тăрăшса ĕçленĕ. Çураки ăнăçлăхне туртăм вăйĕ татса парать. Колхозра лашасене лайăх пăхаççĕ. вăйсăр лашасем çукпа пĕрех. Лашасене кӳлме хăмăтсем, ĕнерчĕксем тата ытти инвентарь çителĕклĕ таранах хатĕрленĕ. Машинăсене, плугсене, сӳресене юсанă. Хире кĕркуннерепе 750 лав тислĕк кăларнă, кунсăр пуçне 7 центнер кĕл, 14 центнер кайăк-кĕшĕк тислĕкĕ пухса хатĕрленĕ.

И. МАКСИМОВ.

КОЛХОЗСЕНЧИ АЧА ЯСЛИСЕМ

РСФСР Сывлăх Халăх Комиссариачĕпе Çĕрĕç Халăх Комиссарианĕ колхозсенче ача яслисем тăвасси çинчен приказ кăларнĕ.

Ача яслисене çураки ĕçĕсем пуçланиччен уçмалла. Ача яслисем валли чи лайăх çуртсем уйăрса памалла, вăл çуртсене юсамалла, яслисем валли сĕтел-пукан, савăт-сапа, кĕпе-тумтир тата аптекăсем туса памалла.

Колхоз правленийĕсем уйăрса паракан апат-çимĕçсĕр пуçне, яслисем валли апат-çимĕçпе промышленность таварĕсене вырăнти фондсенчен те уйăрса памалла. Сывлăх начар ачасем валли санаторири пек режим тумалла.

Кашни колхозрах, ачисен аппĕ-амăшĕсене хутшăнтарса, ясли совечĕсем тумалла. Март уйăхĕнче яслисенче ĕçлекенсен районри канашлăвĕсем пуçса иртмелле, вăл канашлусенче медицина работникĕсем те пулмалла. Колхоз яслисен заведующийĕсем пĕр уйăхлăх курсĕ уçăлмалла. (ТАСС).

Романовски сурăх

Çĕр çул каярах, Ярославль кĕпĕрнинчи Романово-Борисоглебск уесĕнчи хресченсем, çурçĕр енчи кĕске хĕрелле ахаль сурăхсенчен чи лайăххисене суйласа илсе пырса, çĕнĕ сурăх йăхĕ ӳстерме пуçланă. Çав çĕнĕ йăх—романовски сурăх совет влаçĕ вăхăтĕнче, пуринчен ытла колхозсенче сурăх фермисем организациленĕ хыççăн, анлăн сарăлса кайнă.

Романовски сурăхсем хăйсен ăшă çăмĕпе тата хăвăрт ĕрченипе палăрса тăраççĕ. Çултталăкра вĕсем икĕ хут пăрамлаççĕ, пĕрре пăрамланă чухне 2—3 путек тăваççĕ. хăшĕсем 7—8 путек те тăваççĕ. Романовски сурăхсем хăвăрт ӳсеççĕ, вĕсен ашĕ сурăхсен ытти йăхĕсенннчен кая тухмасть.

Çакăн пек питĕ усăллă пулнă пирки романовски сурăхсене халь Совет Союзĕн 23 облаçĕпе крайĕнче тата республикинче ĕрчетеççĕ. Юлашки 10 çул хушшинче государствăн Тутаеври ăратлă выльăх фермисенчен Ярославль облаçĕн тулашне 900 пин путек илсе кайнă. Кунсăр пуçне облаçри колхозсем юлашки икĕ çул хушшинче нимĕç оккупацийĕнчен ирĕке кăларнă районсене 45.500 сурăх янă.

Ярославль облаçĕнчи колхозсенче романовски сурăхсем нумай çитĕ. Юлашки 10 çул хушшинче сурăхсен хисепĕ унта темиçе хут ӳснĕ, мĕнпур сурăхсен 93,2 проценчĕ—ăратлă сурăхсем. Государствăн ăратлă выльăх фермисенне ăратлă выльăх шучĕ çултан çулах ӳссе пырать. Сăмахран, «Элита» ятшши сурăхсен хисепĕ тата пĕрремĕш класри сурăхсен хисепĕ юлашки 8 çул хушшинче 220 пуçран 2.320 пуçа çити ӳснĕ. Чуптармалли такасен хисепĕ 80 пуçран 762 пуçа çитнĕ. Ку вăл пĕтĕм такасен хисепĕн 90 проценчĕ пулать. Такасемпе сурăхсене колхозсенчи животноводсем кирлĕ пек суйласа илсе ӳстернĕ пирки сурăхсен йывăрĕшĕ чылай ӳснĕ. Революциччен çулсенче сурăхсем 32—35 килограмм тайнă пулсан, хальхи вăхăтра вĕсем 48—49 килограмм таяççĕ. хăшпĕр сурăхсем 70—80 килограмм та таяççĕ.

Колхозсенче выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен пит лайăх кадрсем ӳссе çитĕннĕ. романовски сурăх ăратне лайăхлатас тĕлĕшпе вĕсем пысăк ĕç тăваççĕ. Тутаеври Ленин ячĕпе тăракан колхозра ăратлă ферма заведующийĕ В. Н. Черкалов юлашки 6 çул хушшинче ытти облаçсене яма 820 ăратлă путек ӳстерсе панă. Ярославль районĕнчи «14-й Октябрь» колхоз иртнĕ çулта кашни сурăхран, вăтамран шутласан, 3,8 путек илнĕ. сурăх пăхакансем А. П. Шумиловӑпа М. И. Пеперина кашни сурăхран 4-шар путек илнĕ. Облаçра сурăх ĕрчетес тĕлĕшпе чи лайăх ĕçлекенсене, кашни сурăхран виççĕ путекрен кая мар илнĕскерсене, романовски сурăхсене ĕрчетес ĕçĕн мастерĕ ятне панă тата ВКП(б) Обкомĕпе облисполкомăн 1-мĕш степень дипломне парса наградăланă.

Романовски сурăхсем ĕрчетес ĕçре малта пыракан работниксен ăнăçлăхĕ зоотехника работникĕсем пулăшнинчен нумай килет. Акă, сăмахран, Тутаев районĕнчи Борисоглебск участокĕнчи чи лайăх зоотехниксенчен пĕри В. В. Петрова ĕçĕн результачĕ. Вăл 4 фермăна пулăшса тăрать. «Победа» колхозра сурăхсем, вăтамран илсен, 49 килограмм таяççĕ, «Большевик» колхозра—52 килограмм, «15 лет Октября» колхозра—53 килограмм, «Новый путь» колхозра—55,5 килограмм. «Большевик» тата «Новый путь» колхозсенчи выльăх хисепĕн 90 проценчĕ «Элита» ятшши тата 1-мĕш класри сурăхсем. Петрова зоотехник çакăн пек ăнăçусене кашни çулах выльăха ăратлăх енчен хакласа пынипе пула, лайăх выльăха суйласа илес тĕлĕшпе пĕр чарăнмасăр ĕçлесе пынипе пула тунă.

Мышкинс районĕнчи Т. Н. Мятникова зоотехник та пысăк çитĕнÿсем тунă.

Малта пыракан фермăсен ăнăçăвĕсенче выльăха усрама тивĕçлĕ условисем туса пыни те паха вырăн йышăнса тăрать. 1942—1944 çулсенче 28.585 сурăх валли витесем тунă. 1945 çулта 40.000 сурăх валли витесем тума палăртса хунă.

Облаçра сурăх фермисенчи ĕçе йĕркелес тата ĕçшĕн тӳлес ыйту çине тимлĕн çавăрăнса пăхаççĕ. Кăçал выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекенсене плана ирттерсе тултарнăшăн выльăхпа тӳлессине ӳстереççĕ. Тĕрлĕ çулхи сурăхсене пăхакан кĕтӳçĕ путексене ĕмме пăрахтариччен кашни 100 сурăх пуçне 150 путекрен кая мар ӳстерсен, çак шутран ирттерсе ӳстернĕ путексен çуррине ăна хăйне памалла. Сăмахран, Мышкино районĕнчи Сталин ячĕпе тăракан колхозри сурăх пăхакан Н. Свиткова, 1944 çулта 15 сурăхран 23 путек илес вырăнне 49 путек илнĕскере, çĕнĕ йĕрке тăрăх 18 путек уйăрса парӑççĕ. Ĕçшĕн çавăн пек хушса тӳлени выльăх-чĕрлĕх ĕрчетекен çынсене хăйсен ĕçне лайăхлатма пулăшать.

Ярославль облаçĕнчи колхозсемпе совхозсен çывăхри çулсенчех хăйсен облаçне чи лайăх ятшши романовски ăратлă сурăхсене ĕрчетекен вырăн туса хума пур условисем те пур.

П. МИРОЛЮБОВ.

Облаçри çĕрĕç пайĕн главнăй зоотехникĕ.

ЯРОСЛАВЛЬ. февралĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС).

ПАРТИ ПУРНĂÇĔ

Тăвай районĕнче парти уставне пăсаççĕ

Отечественнăй асла вăрçă çулĕсенче малта пыракан ĕççынисене парти ретне илес ĕç Тăвай районĕнче нумай лайăхланчĕ. 1942 çулхи ноябрь уйăхĕпе 1945 çулхи февралĕн 1-мĕшĕ хушшинче партие пурĕ 213 çынна, вăл шутран ВКП(б) членне 84 çынна, кандидата 129 çынна илнĕ.

Парти ретне кĕрекен юлташсем лайăх пример кăтартса ĕçлеççĕ. Вĕсенчен хăшпĕрисем правительство наградисене те илме тивĕçлĕ пулчĕç. М. Паромонова юлташ Татмăшри пуçламĕш шкулăн заведующийĕ пулса ĕçлет. Шкулта вĕренӳпе воспитани ĕçне лайăхлатнăшăн ăна «За трудовое отличие» медальпе тата Чăваш АССР Верховный Совет Президиумĕн Хисеплĕ грамотипе наградăланă. Районри хаçат редакцинче ĕçлекен А. Мухин Отечественнăй вăрçă фрончĕсенче паттăр çапăçнăшăн «Хĕрлĕ Çăлтăр» орденĕпе «За отвагу» медаль илме тивĕçлĕ пулнă. Отечественнăй вăрçă инвалидĕ К. Краснов ял Совет исполкомĕн председателĕ пулса ĕçлет. Ăна «За оборону Ленинграда» медальпе наградăланă.

Малта пыракан ĕççыннисене парти ретне илес тĕлĕшпе уйрăмăнах МТС-ри пуçламĕш организаци лайăх ĕçлет. Отчетлă тапхăрта унта 26 çынна парти ретне илнĕ. Çавнашкалах «Красная Чувашия» колхозри организацире 15 çынна, райсовет исполкомĕ çумĕнчи организацире 12 çынна парти ретне илнĕ.

Çав вăхăтрах Çĕн Пуянкассинчи, Эльпуçĕнчи, Татмăшри. Çĕн Тăрмăшри тата райсоюз çумĕнчи пуçламĕш парторганизацисем малта пыракан ĕççыннисене парти ретне илес тĕлĕшпе çителĕксĕр ĕçлеççĕ-ха. Вăл организацисенче пĕтĕмпе те 3—5 çынна çеç парти ретне явăçтарнă.

Парти ретне ĕçре тĕрĕсленнĕ, малта пыракан ĕççыннисене илмелле. Анчах хăшпĕр пуçламĕш организацисенче партие илес ĕç çине çиелтен пăхнисем те тĕл пулаççĕ. «Красная Чувашия» колхозри пуçламĕш организаци растратăшăн судпа айăпланнă çынна—Герасимова ВКП(б) членĕн кандидатне илнĕ. Вăл кандидата кĕнĕ хыççăнах ĕçкĕпе ашкăнма, хулиганланса çӳреме тытăннă. ВКП(б) райкомĕ пуçламĕш парторганизацин В. Герасимова кандидата илме йышăннă решенине пăрахăçларĕ.

Çĕн Пуянкассинчи пуçламĕш организаци промартель председателĕ пулса ĕçлекен Сергеев юлташа пĕр рекомендаци тăратнипех ВКП(б) членĕн кандидатне илнĕ. Тепĕр рекомендацине партие илнĕ хыççăн 15 кунран çеç тупса тăратнă. Çак ĕç çинчен ВКП(б) райкомĕн оргинструкторски отделĕн заведующийĕ пĕлнĕ пулин те, ун пирки райком бюроне пĕлтермен. Çапла вара ВКП(б) райкомĕ те Сергеев юлташа кандидата илнĕ. Çакă вăл ВКП(б) уставне тӳрремĕнех пăсни, партие илес ĕç çине çиелтен пăхни пулать.

ВКП(б) райкомĕ 1943 çулхи февральте Е. Белковăна ВКП(б) членĕн кандидатне илнĕ. 1944 çулхи январь уйăхĕнче ăна, упăшки тата тăванĕсем судпа айăпланине пытарнăшăн, парти ретне ăнсăртран кĕрсе кайнă тесе, кандидатран кăларса пăрахнă.

ВКП(б) Центральный Комитечĕ кăтартса панă тăрăх, парти ретне илнĕ юлташсене парти документĕсене 10 кун хушшинче памалла. Анчах ВКП(б) райкомĕ çак кăтартăва та тивĕçлипе пурнăçласа пымасть-ха. Хăшпĕр коммунистсем нумай вăхăт хушши парти документĕсене илеймеççĕ. МТС организацийĕнчи ВКП(б) членĕ Харитонов юлташ парти документне 1944 çулхи апрель уйăхĕнчепе, районри çĕрĕç пайĕнчи агроном С. Михайлов тата Игнатьев юлташсем 1944 çулхи июль уйăхĕнчепе, Тăвай ялсоветĕн председателĕ Петров юлташ 1944 çулхи август уйăхĕнчепе парти документне илеймест.

Нумаях пулмасть партин районри пур пуçламĕш организацийĕсенче те отчетпа суйлав пухăвĕсем пулса иртрĕç. Çав пухусенче коммунистсем критикăпа самокритикăна анлăн сарса пычĕç. Пуçламĕш парторганизацисен тата ВКП(б) райкомĕн ĕçĕсенчи çитменлĕхсене нумай палăртрĕç, вĕсене пĕтермелли майсене кăтартса, сĕнӳсем пачĕç.

Пухусенче уйрăмăнах партие илессипе çамрăк коммунистсене воспитани парасси çинчен нумай чарăнса тăчĕç.

Çамрăк коммуниста воспитани парас ĕç ăна парти членĕн кандидатне илнĕ кунран пуçланать. Кандидатра тăнă партин пулас членне политика тĕлĕшпе ӳсме, парти членĕн ответлă та хисеплĕ задачисене пурнăçа кĕртме, дисциплинăллă пулма хăнăхтарать. Çамрăк коммунистăн кандидатра тăнă вăхăчĕ ăна идейăпа политика енчен воспитани памалли тата унăн политикăпа ĕçри пахалăхне тĕрĕслемелли шкул пулса тăмалла.

ВКП(б) райкомĕ те, партин хăшпĕр пуçламĕш организацийĕсем те, кандидатсемпе кирлĕ пек ĕçлемеççĕ-ха. Кăçалхи февралĕн 1-мĕшĕ тĕлне районра ВКП(б) членĕн кандидачĕсем 83 çын пулнă. Вĕсенчен 31 çыннăн кандидатра тăмалли вăхăт иртсе кайнă. Çакă вăл çамрăк коммунистсемпе çителĕксĕр ĕçленинчен, вĕсене идейăпа политика тĕлĕшĕнчен воспитани парас ĕçе начар туса пынинчен килет. Çавна пулах хăшпĕр çамрăк коммунистсем хăйла тĕлĕшĕнчен пăсăлса каяççĕ.

Çамрăк коммунист, ВКП(б) членĕ М. Петров санаторине кайнă чухне парти документне çухатнă. Çав документа чылай вăхăт иртсен, пĕр хĕрарăм хватерĕнче тупнă. ВКП(б) членĕн кандидачĕсем И. Петров тата Евдокимов юлташсем кандидат карточкисене тирпейлĕ сыхласа усраман. М. Карпова кандидат карточкине çухатнă, 6 уйăх хушши член укçи тӳлемен, ĕçрен тарнă, кандидата кĕнĕ чухне тăванĕсене судпа айăпланине пытарнă. ВКП(б) райкомĕ М. Карповăна кандидатран кăларса пăрахнă.

Çак тĕслĕхсем ВКП(б) райкомĕпе партин хăшпĕр организацийĕсем партие илес ĕç çине çиелтен пăхни тата çамрăк коммунистсемпе çителĕксĕр ĕçлени çинчен калаççĕ.

Кандидата илнĕ юлташсене партиллĕ тата общественăллă ĕçсене активлăн хутшăнтарса, вĕсене идейăпа политика енчен ӳссе пыма пулăшмалла. Çамрăк коммунистсене большевикла воспитани парасси—парти ĕçĕнчи чи кирлĕ те ответлă участокĕсенчен пĕри пулса тăрать. Çак ĕçе куллен тата тивĕçлипе туса пымалла.

П. КОЗЛОВ.

Учительсем валли докладсем

ХЕРЛЕ ЧУТАЙ. Районри çутĕç пайĕ çумĕнче лекторсен группине организациленĕ. Вăл 35 лектора пĕрлештерсе тăрать. Лекторсем, ĕççыннисем хушшинче докладсемпе лекцисем ирттернипе пĕрлех, районри учительсем хушшинче те сахал мар ĕçлеççĕ.

Çак кунсенче Питĕркасси подрайонĕнчи учительсене И. Н. Яштайкин юлташ М. Горькин пурнăçĕпе ĕçĕсем çинчен лайăх доклад туса пачĕ. В. А. Еремеевăн «Урокра курса вĕренмелли япаласемпе усă курасси» темăпа тунă доклачĕ те учительсене питĕ килĕшрĕ.

П. ТИХОНОВ.

ДОНБАСРИ ШАХТĂСЕМПЕ ТАТА ЗАВОДСЕМПЕ ТЕЛЕФОН ТĂРĂХ ТӲРРЕМĔНЕХ ÇЫХАННИ

Çĕркăмрăк промышленноçĕн Халăх Комиссариачĕ, Мускавпа Донбасс хушшинчи телефон çыхăнăвне юсаса пĕтерсе, сăнама пуçланă. Вăл линие нимĕç оккупанчĕсем çĕмĕрсе тăкнă пулнă. Çав линин тăршшĕ 800 километр. Çĕнĕрен 20.000 телеграф юпи лартнă. 1.700 километр тăршшĕ пралук карнă. Мускавра, Тулăра, Харьковра тата Сталино хулинче 4 телефон станцийĕ туса лартнă. Çапла вара, Наркомат Донбасри шахтăсемпе тата заводсемпе тӳрремĕнех çыхăнма пултарать. (ТАСС).

Варшава хулинчи „Аллея Уяздовска" ятлă урама „Иосиф Сталин Маршал Аллейи" тесе ят пани

ВАРШАВА. февралĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Польшăпа совет халăхĕсем хушшинчи туслăха ĕмĕрлĕхе палăртса хăварас шутпа Польша республикин министрсен совечĕ Варшаври чи илемлĕ те чи лайăх урамсенчен пĕри пулса юлнă «Аллея Уяздовска» ятлă урама «Иосиф Сталин Маршал Аллейи» тесе ят памалла тунă.

Хĕвеланăç Европăри вăрçă ĕçĕсем

ЛОНДОН. февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ февралĕн 27-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Германире союзниксен пехотнăй чаçĕсем, танксем пулăшнипе тăшман вăйлă хирĕç тăнине çĕмĕрсе-çĕмĕрсе, малалла каяççĕ, вĕсем Рейн облаçĕнчи Кеппельн хули патне çитнĕ, халĕ тăшманпа çав хулара хаяррăн çапăçаççĕ.

Рер шывĕнчен хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем каллех малалла кайнă. Линних хулинчен çурçĕртерехри районра союзниксем Грантерат хулине Кукхоф хулине туртса илнĕ. Юлих хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Амельн пункчĕпе Оберембт пунктне тата Гамбах вăрманĕн çуррине ытла туртса илнĕ. Юлих хулипе Дюрен хули районĕнче союзниксен çарĕсем Эльсдорф хули тулашне пырса çитнĕ. Блацхейм, Эшвейлер тата Фраувюлесхейм пункчĕсене кĕнĕ. Нумай хуласем туртса илнĕ. Вăл шутра Бюир Гольцхейм, Роммерсхейм, Дрофе, Боис хулисем. Дюрен хулине тăшмантан пĕтĕмĕшпех тасатнă.

Союзниксен танковăй чаçĕсем Бисбург хули сывăхĕнче Нимс шывĕ урлă каçса кайнă. Ку районра союзниксем Лиссен, Обервейс, Беттинген тата Меççрих пункчĕсене йышăннă.

Саарбург хулинчен çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен танковăй отрячĕсем Шоден хулине тăшмантан тасатнă.

Февралĕн 24-мĕшĕнче союзниксем 3.500 нимĕçе тыткăна илнĕ.

Февралĕн 26-мĕшĕнче 1.200 йывăр бомбардировщик ытла, 700 истребитель ытла хӳтĕлесе пынипе, Берлин хулинчи виçĕ чугун çул станцине тапăннă.

Йывăр бомбардировщиксен ытти соединенийĕсем, истребительсем хӳтĕлесе пынипе Дортмунд хулинчи синтетически нефть заводне атакăланă.

Февралĕн 27-мĕшĕ ирхан тенĕ чух сĕрле çăмăл бомбардировщиксем Берлинпа Нюрнберг хулине атакăланă.

Союзниксен авиацийĕ тăшман çулйĕрĕсене тапăннă.

ЛОНДОН. февралĕн 27-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавраşĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ февралĕн 27-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Италире тăшман Бельведере тата Делла-Торраччия ятлă çӳллĕ вырăнсем çинче 5-мĕш армин чаçĕсем йышăнса тăракан позицисене атакăланă. 5-мĕш армин чаçĕсем тăшман атакисене сирсе янă, тăшмана самаях пысăк çухатусем кӳнĕ. 5-мĕш армипе 8-мĕш арми йышăнса тăракан ытти участоксенче патрульсем кĕрешнĕ.

Союзниксен тактика авиацийĕнче тăракан самолетсен пысăк соединенийĕсем февралĕн 26-мĕшĕнче тăшманăн Çурçĕр Италири тата Югославири объекчĕсем çине бомбăсем пăрахнă. Февралĕн 26-мĕшĕ ирхан тенĕ чух сĕрле çăмăл бомбардировщиксем Çурçĕр Италири çулйĕр объекчĕсене, электростанцие тата пĕр завода ăнăçлăн атакăланă. Çавăн пекех тата Австрири пĕр аэродрома ăнăçлă тапăннă.

ЛОНДОН, февралĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен экспедициллĕ вăйĕсен верховнăй командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: Германире, Эркеленцран хĕвелтухăçнерехре, союзниксен çарĕсем Кукумпа Боршемих хулисене йышăннă хыççăн Эрфт шывĕн сулахай çыранĕнче ларакан Кенигсофен хулине пырса кĕнĕ. Унтан кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен бронетанковăй чаçĕсем 9,6 километр малалла кайнă та Кельнран 16 километр хĕвеланăçнерехре ларакан Зиндорф хулине пырса кĕнĕ. Зиндорф хулинчен çурçĕр-хĕвеланăçнерехре тата кăнтăртарахра халăх пурăнакан чылай пунктсене тăшмантан тасатнă.

Дюренран хĕвелтухăçнерехре тата кăнтăр-хĕвелтухăçнерехре союзниксен çарĕсем Эшвейлер тата Якобсвюльхейсхам хулисене йышăнса илнĕ хыççăн Ветвейс тавраşĕнче тăшманпа çапăçма пуçланă.

Гюртгенран хĕвелтухăçнерехре Недегюна тăшмантан тасатнă.

Битбургран çурçĕртерехре союзниксен çарĕсем Наттенхейм тата Матцен хулисене йышăннă. Флиссен хулине тăшмантан тасатнă. Битбург хулине пырса кĕнĕ. Битбург хулинчен кăнтăртарахра çав хулапа Трир хушшинчи çула виçĕ тĕлте татнă. Союзниксен çарĕсем Обер-Штеден, Эссинген тата Меккель хулисене тăшмантан тасатнă. Союзниксен ытти чаçĕсем Иррель тата Гильзем хулисене пырса кĕнĕ, Нидервейс тата Кашенаах хулисене тăшмантан тасатнă.

Унтан кăнтăртарахра союзниксен çарĕсем Мозельпе Саар шывĕсем пĕрлешнĕ çĕрте ларакан Вассербиллиг хулине пырса кĕнĕ. Союзниксен çарĕсем Саар шывĕ хĕрринчи укрепление 9,6 километра çити сарнă. Беуриг хулине тăшмантан тасатнă. Союзниксен бронетанковăй чаçĕсем Саарбург хулинчен 10 километр хĕвелтухăçнерехре ларакан Нидерзерф хулине тытса илнĕ. Унтан хĕвелтухăçнерехре тата Рейн шывĕ тăрăх лăпкă тăрать.

Февралĕн 26-мĕшĕнче союзниксен çарĕсем хĕвеланăç фронтĕнче 8.000 çын ытла тыткăна илнĕ.

ЛОНДОН, февралĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавраşĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре каланă тăрăх, Итали фронтĕнче нимĕнле паллă улшăну та пулман.

Союзниксен авиацийĕ Çурçĕр Италири, Австрири тата Кăнтăр Германири тăшман объекчĕсене вăйлăн пыра-пыра тапăннă. Кăнтăр Германири Аугсбург хули çине йывăр бомбардировщиксем 1.000 тонна ытла бомба пăрахнă.

АМЕРИКА АВИАЦИЙĔ ГЕРМАНИЕ ЙЫШЛАН ТАПАННИ

ЛОНДОН, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Американецсен стратегиллĕ сывлăш-çар вăйĕсен штабĕ пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 28-мĕшĕнче кăнтăрла американецсен сывлăшри 8-мĕш корпусĕн составне кĕрекен «Вĕçекен крепость» тата «Либерейтор» ятшши 1.100 йывăр бомбардировщик Çурçĕр-хĕвеланăç Германири чугун çулпа промышленность объекчĕсене йышлăн вĕçсе пырса тапăннă. Бомбардировщиксене «Мустанг» ятшши 350 самолет хӳтĕлесе пычĕ. Германин чугун çул центрĕ пулса тăракан Кассель çине тата унтан 15 мильăран кăнтăр-хĕвеланăçнерехре ларакан Гамм, Шверте тата Хаген хулисем çине бомбăсем пăрахнă.

АНГЛИ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ШАННИ ÇИНЧЕН КАЛАКАН РЕЗОЛЮЦИЕ ОБЩИНĂСЕН ПАЛАТИ ПĔР САСЛАН ЙЫШĂННĂ

ЛОНДОН, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, общинăсен палати правительствăна шанни çинчен калакан резолюцие пĕр саслăн йышăннă. Çав резолюцишĕн палатăра 413 çын сасăланă. Сасăласси правительство сĕннипе пулса иртнĕ. Крымри конференцире тунă ĕçсене правительство ырлама ыйтнă пулнă.

АЛЕКСАНДЕРПА ТИТО ХУШШИНЧИ КАЛАÇУ

БЕЛГРАД, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Данюг агентстви пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: союзниксен Вăтаçĕр тинĕс тавраşĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен верховнăй главнокомандующийĕ Гарольд Александер фельдмаршал Белграда пырсă Иосип Броз-Тито маршалпа калаçнă. Вĕсем çав районра тăшмана тăтăклăн çĕнтеричченех вăрçасси çинчен калаçнă.

БЕЛЬГИ ПРАВИТЕЛЬСТВИНЕ ЯТАРЛАСА ПАНА ПОЛНОМОЧИСЕМ

ЛОНДОН, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). АФИ агентстви çапла пĕлтерет: Бельгири депутатсен палати правительствăна ятарласа панă полномочисене сарасси çинчен калакан закон проектне çирĕплетнĕ. Вăл закон майлă 84 çын сасăланă, 29 çын ăна хирĕç сасăланă, 10 çын сасăламан. Çав закон тăрăх, Бельги правительстви предприятисене çар ĕçне туса тăма мобилизацилеме пултарать, экономика ĕçне ертсе пырассине тата снабжени органĕсен ĕçĕсене ертсе пырассине хăй çине илме пултарать, ĕçе мобилизацилемешкĕн 18 çултан пуçласа 45 çула çитнĕ çынсене—арçынсемпе хĕрарăмсене—черепиç туса ирттерме пултарать. Çитес эрнере çав проекта сената параççĕ.

ФИНЛЯНДИ ХАЛАХĔН ДЕМОКРАТИЛЛЕ СОЮЗĔН СУЙЛАВ УМĔНХИ ПУХĂВНЕ ЧАРМАНТАРМА ХАТЛАННИ

ХЕЛЬСИНКИ, февралĕн 28-мĕшĕ. (ТАСС). «Вапаа сана» хаçат пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 25-мĕшĕнче Иоэнсу хулинче Финлянди халăхĕн демократиллĕ союзĕн суйлав умĕнхи пухăвĕ пулмалла пулнă. Вăл пухура «Финлянди—Совет Союзĕ» ятлă обществăн председателĕ—финанс министрĕ Хэло сăмах тухса каламалла пулнă. Пуху ирттерме хулара тивĕçлĕ пӳлĕм тупма май килмен. Хула управи те хăйĕн пӳлĕмне пуху ирттерме паман. Çавăн пирки те ĕнтĕ пухăва хуларн площадьре ирттермелле пулнă. «Вапаа сана» хаçат каланă тăрăх, пухура халăх çав тери нумай пулнă. Хăйĕн сăмахĕнче Хэло министр çакна кăтартса панă: Паасикиви премьер-министр чĕнсе каланине суйлава хутшăнакан политика ушкăнĕсене пурне те пухусем ирттерме пӳлĕм пама кирли çинчен каланă пулин те, пирĕн пухăва урамра ирттермелле пулчĕ, тенĕ. Финлянди халăхĕн демократиллĕ союзĕ майлă тăракан çынсем йышлĕ пулин те, ăна пухусем ирттерме те, хаçатсем кăларма та пӳлĕм паманни йĕркесĕр ĕç пулса тăрать, тенĕ.

«Вапаа сана» хаçат çав номертех фашистла элементсем тĕрлĕ çĕрте Финлянди халăхĕн демократиллĕ союзĕн плакачĕсемпе пĕлтерӳĕсене çура-çура пăрахни çинчен пĕлтерет. Нюммела поселокĕнче çавăн пек плакатсене «Братство по оружию» союзĕн вырăнти отделенийĕн председателĕ пулса ĕçленĕ Вейкко Хэлле çура-çура тăкнă. Хальхи вăхăтра вăл социал-демократсен вырăнти организацийĕн председателĕ тата партин сейма суйлама тăратнă кандидачĕ пулса тăрать. Вейко Хэллене вăл плакат çурнă вăхăтра тытнă.

Лăпкă океан çинчи вăрçă

ЛОНДОН, февралĕн 23-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ пĕлтернине парать. Унта çапла каланă: Америка çарĕсем Лусон утравĕпе Самар утравĕ хушшинчи Сан-Бернардино проливĕнче ларакан Капуль утравĕ çине аннă. Япони çарĕсем вăйлă хирĕç тăман. Капуль утравĕ вăл паха вырăн йышăнса тăрать, мĕншĕн тесен Манила бухтине каякан тĕп çул çав утрав çумĕнчен иртсе каять.

Америка çарĕсем Манила хулин пайĕнче Япони чаçĕсене пĕтерсе тăкасшăн çапăçаççĕ. Американецсен ытти чаçĕсем хуларан кăнтăр-хĕвелтухăçнелле куçса пыраççĕ.

ЛОНДОН, февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Рейтер агентстви пĕлтернĕ тăрăх, союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ февралĕн 26-мĕшĕнче пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре çапла каланă: «Лусон утравĕнче (Филиппин утравĕсем) Америка çарĕсем Сан-Исидоро тата Мотальба хулисене туртса илнĕ. Ку хуласем Манила хулинчен 10 миля çурçĕр-хĕвелтухăçнерехре лараççĕ.

ТОКИО. февралĕн 26-мĕшĕ. (ТАСС). Домей Цусин агентстви пĕлтернĕ тăрăх, февралĕн 25-мĕшĕнче ирхине американецсен оперативнăй эскадрин авианосецĕсем çинчи 600 самолета яхăн Японин Канто районне тапăннă. Унсăр пуçне тата кăнтăрла иртсен американецсен «Б—29» ятшши 130 самолетне яхăн Токио çине вĕçсе пырса бомбăсем пăрахнă.

ЛОНДОН, мартăн 1-мĕшĕ. (ТАСС). Союзниксен Лăпкă океанăн кăнтăр-хĕвеланăç пайĕнчи хĕçпăшаллă вăйĕсен пĕрлешӳллĕ командованийĕн штабĕ пичетлесе кăларнă пĕлтерӳре каланă тăрăх, Коррегидор утравĕ çинче Америка çарĕсем Япони гарнизонне пĕтерсе тăкас ĕçе вĕçленĕ.

Отв. редактор заместителĕ А. А. ЭСХЕЛЬ.

РЕДАКЦИ АДРЕСĔ: г. Чебоксары, ул. Володарского 5 Дом печати. ТЕЛЕФОНСЕМ редактордн — 5—67, заместителĕн — 0—23, секретарĕн — 4—26, парти пурнăç пайĕн 3—97, промышленность пайĕн — 3—99, ялхуçалăх пайĕн — 5—31.

НТ 00254 Типография № 1, Управления полиграфпромышленности при СНК ЧАССР Заказ № 2, Тираж 16.000